# Салам, Светофор!

*(Çул-йĕр правилисене вĕренмелли вăйă сценарийĕ)*

***Л.М. ПЕТРОВА**, Элĕк районĕнчи Тавăтри 3-мĕш номерлĕ «Пучах» ача сачĕн воспитателĕ*

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир сирĕнпе пурте пĕрле хула ураменчи Светофор патне çыру çырнине астăватăр-и? Ăна садике хăнана чĕннĕччĕ. Вăл пирĕн пата килме шантарнăччĕ, халĕ акă хăйĕн сăмахне тытрĕ.

С в е т о ф о р кĕрет.

С в е т о ф о р. Сывлăх сунатăп сире, пĕчĕк тусăмсем! Сире курма питĕ хавас. Эсир мана палларăр пуль тетĕп. Эпĕ – Светофор.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасем сире лайăх палласçĕ. Светофор мĕн тума кирлине те пĕлесçĕ. Эсĕ яланах çул çинче, кунĕн-çĕрĕн канăçсăр ĕçлетĕн. Çавăнпа та сана хамăрăн уява канма чĕнес, пĕрле выляс терĕмĕр.

С в е т о ф о р. Тавтапуç. Ачасем, манăн юратнă тĕссене пĕлетĕр-и-ха эсир?

А ч а с е м. Хĕрлĕ, сарă, симĕс.

С в е т о ф о р. Тĕрĕс. Пĕрремĕш тĕс – ***хĕрлĕ***. Çул урлă каçакан ватти-вĕттине те, транспорт та хĕрлĕ тĕсе курсан чарăнса тăрать. Пурте кăштах канса илесçĕ. Иккĕмĕш юратнă тĕс – ***сарă***. Вăл пурне те çул çинче: «Асăрханăр, пĕр-пĕрне упрăр, çул урлă каçма хатĕрленĕр», – тет. Виççĕмĕш юратнă тĕс – ***симĕс***. Çак тĕс çуталса кайсан мĕн тумалла-ха, тусăмсем?

А ч а с е м. Çул урлă каçмалла.

С в е т о ф о р. Тĕрĕс, симĕс тĕс çуталсан çул урлă каçма юрать. Халь вара сире пĕр вăйă выляттарас килет. Асăрхăр-ха, ак çакăнта манăн юратнă тĕссемпе илемлетнĕ мечĕксем. Сирĕн вĕсене, тĕсне кура, кăшăлсем ăшне хурса тухмалла. Хĕрлине – хĕрли ăшне, саррине – сарă кăшăл варрине, симĕссине – симĕс кăшăлиа.

Хаваслă кĕвĕ янăрать, ачасем мечĕксене кирлĕ çĕре хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Маттур, ачасем! Светофор, пирĕн ачасем сан çинчен сăвă та пĕлесçĕ.

С в е т о ф о р. Ăҫтан килетĕр? Эпĕ хаваспах итлетĕп.

1 - м ĕ ш   а ч а.

Эх, чупаççĕ вăр! та вар!

Машинсем унта-кунта.

Ак виç куçлă светофор

Куç хĕсет мана.

2 - м ĕ ш   а ч а.

– Тăхта!

Ай, ан каç çул урлă! – тет

Хĕрлĕ куç. – Инкек çеç тăвăн!

3 - м ĕ ш   а ч а.

– Тимлĕ пул! – тесе хистет

Сарă куçĕ те. – Çул хупă!

4 - м ĕ ш   а ч а.

Йăл çиçет те симĕс куç:

– Уттарах! – тет. – Тавтапуç!

С в е т о ф о р. Маттур, ачасем, питĕ килĕшрĕ ку сăвă мана. Светофорпа юнашарах çакăн пек йăрăмлă-йăрăмлă çулсем пулнине пĕлетĕр. Мĕн ятлă-ши вĕсем?

А ч а с е м. «Зебра» теççĕ вĕсене.

С в е т о ф о р. Мĕн тума кирлĕ-ха çак йĕрсем?

А ч а с е м. Çул урлă каçма. Çынсем йышлă çӳренĕ вырăнта пулаççĕ вĕсем яланах.

С в е т о ф о р. Ачасем, мĕн тери маттур вĕт-ха эсир! Йăлтах пĕлетĕр.

В о с п и т а т е л ь. Светофор, хăвăн çуттусене çутса тĕрĕсле-ха! Çул урлă каçма пĕлеççĕ-и пирĕн ачасем?

Светофор малтан хĕрлĕ, кайран сарă çавракисене çутатса кăтартать. Симĕс тĕспе çутатсан ачасем çул урлă каçаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр хамăрăн хăнана тепĕр вăйă выляса кăтартар. Вăйă ячĕ – «Машинăпа кайăксем».

Ачасем кайăксен маскисене тăхăнаççĕ.

В о с п и т а т е л ь.

Вĕçсе килчĕç кайăксем,

Пĕчĕк-пĕчĕк чĕпписем

Сиккелеççĕ çул çинче,

Вĕçсе çӳреç майĕпен,

Шыраç тырă пĕрчине.

Ачасем хăйсене кайăксем пек тыткалаççĕ, çуначĕсемпе «вĕçеççĕ», кайран пĕшкĕнсе ларса урайне пӳрнисемпе таккаса «тыра» пĕрчисене шыраççĕ. А р ç ы н а ча руль тытса юрласа тухать.

А р ç ы н а ча.

Тӳрĕ тикĕс çулпалла

Пĕр автобус вĕçтерет.

Хăйне ирĕк çул пама

Вăл таçтанах систерет:

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!

Таптанатăн вĕт, асту!

Ачасем пукансем çине кайса лараççĕ. Вăййа икĕ-виçĕ хутчен выляççĕ.

С в е т о ф о р. Питĕ маттур эсир, ачасем! Манăн тата ыйтусемпе тупмалли юмахсем парса сирĕн тавракурăма тĕрĕслес килет. Эсир итлеме хатĕр-и?

А ч а с е м. Светофор тус, хатĕр!

С в е т о ф о р. Итлĕр апла.

– Хăй курмасть, ăçталла каймаллине пурне те кăтартса ярать. *(Çул палли.*)

– Çӳренĕ чух çӳретĕп,

Вĕçертсенех ӳкетĕп. (*Велосипед.*)

– Урамра урапаллă пӳртсем чупаççĕ,

Çынсене ĕçе турттараççĕ,

Ачасене шкула леçеççĕ. (*Автобус.*)

С в е т о ф о р. Чун савăнать: мĕн тери пултарулллă ачасем! Выляма та, канма та пĕлетĕр эсир. Сире, маттур ачасене, парнепе савăнтарас тетĕп. Акă илсемĕр. (*Кашни ачана транспорт, çул-йĕр правилисемпе çыхăннă плакатсем парнелет*.) Ну, халĕ манăн кайма вăхăт çитрĕ. Çул çинче асăрханса çӳрĕр. Сывă пулăр, тепре тĕл пуличчен.

А ч а с е м. Сывă пул, Светофор тус! Тепре тĕл пуличчен!

С в е т о ф о р тухса каять, воспитательпе ачасем хăна парнисемпе паллашаççĕ.